Çĕр ĕçченĕн – 100 ĕç

Çум курăкĕпе кĕрешмелли вăхăт çывхарать

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем çур аки вĕçлесе пынă май ял çыннисем те килти хушма хуçалăхĕсенче çĕр улми, пахча çимĕç лартса пĕтереççĕ. Ку лайăх-ха, анчах акни-лартнипех тухăç илейместĕн-çке. Умра çум курăкĕпе тата ӳсен-тăран сăтăрçисемпе кĕрешес ĕç тăрать. Кунта хăш культура çинче мĕнле эмелпе тата химикатсемпе усă курма юрать? Çак ыйту паян нумайăшне кăсăклантарать.

Л. АРТЕМЬЕВ.
Кашмаш ялĕ.

Вулакан ыйтăвĕ çине хурав шыраса эпир «Россельхозцентр» филиалăн Муркаш районĕнчи пайĕн пуçлăхĕпе В. МОРОЗОВПА тĕл пултăмăр.

– Çанталăк условийĕсене кура кăçал çур аки ытти çулхисем пекех кал-кал иртрĕ. Район паянхи куна пĕтĕмпе 10 пин гектара яхăн çуртрисем, 700 гектар ытла пĕр çул ӳсекен курăксем тата 60 гектар майлă вылăх кăшманĕ акрĕ, 1000 гектар патне çĕр улми лартрĕ. Маларах акнă хирсем ешĕл кавирпе те хупланчĕç ĕнтĕ. Анчах акни-лартнипе кăна кĕлете тыр-пул кĕртеймĕн. Çĕр ĕçченĕн практикинче акса-лартса хăварнине тĕрĕстĕкел пăхса çитĕнтересси тĕп вырăн йышăнать. Çакă яланхи ĕç пулнине пĕлетпĕр пулсан та, акаран кĕрсен ун пирки манса каятпăр. Кайран вара çум айне пулнă, сăтăрçăсемпе чир-чĕрсем тухăça палăрмаллах пĕчĕклетнĕ хирсенче ытарлă каласан «суя вырма» ирттеретпĕр. Ăна валли техника юсатпăр, сĕрмелли-çунтармалли материалсем тăкаклатпăр, ĕç укçи тӳлетпĕр, анчах хамăр ĕç тăкаксене саплаштарманнинчен «тĕлĕнетпĕр», çур хĕлте выльăхсем валли тырă шырама пуçлатпăр. Каллех тăкаксем – ăçта кунта аталану вырăнĕ? Çак суя çултан пăрăнас тесен паянах акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел ӳстерес тесе çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнмелле.

Çумпа, хурт-кăпшанкăсемпе, ӳсен-тăран чирĕсемпе паян эпир – ку вăл пуриншĕн те паллă – хими препарачĕсемсĕр тухăçлă хӳтĕленейместпĕр. Вĕсемпе ĕçлессин те кашнин хăйĕн вăхăчĕ. Çакна çеç калатăп, ку ĕçре чи хаклă препаратсемпе усă курсан та тăкаксем гектартан 2 центнер тырă ытларах туса илсен саплашăнаççĕ. Çавăнпа та гербицидсемпе, фунгицидсемпе, инцектицидсемпе вăхăтра тата вырăнлă ĕçлени хуçалăх экономикине пуянлатать кăна.

Район çулленех пысăк лаптăк çинче çĕр улми лартса хăварать. Ăна тĕрлĕ чир-чĕртен сыхласа хăварасси – кашни ял çыннине пырса тивекен ыйту. Çавăнпа та кунта вăхăтра татса памалли ыйтусем нумай. Тĕслĕхрен, çĕр улмине лартнă хыççăн çум курăкĕ шурă çип фазине лариччен агротехнологипе килĕшӳллĕн 5-7 кунтан анана сӳрелемелле. Хыççăн та çĕр улми кассисене чĕрсе кăпкалатса тăни çум курăкне пуç çĕклеме памасть. Çумпа химилле майпа кĕрешмелли лайăх препаратсем «Торнадо» (ăна çĕр улми шăтиччен), «Лазурит» (çĕр улми шăнсанах сапмалла). Çак имçамсем пусăсенче пучахлă курăксене, йытпыршине, шурут курăкне, уй пиçенне т. ыт. те пĕтерме пулăшаççĕ.

Колорадо нăррипе кĕрешме хатĕрленессине те ырана хăвармалла мар. Кунта «Актара», «Танрек», «Сэмпай» т. ыт. препаратсемпе усă курмалла.

Уйрăм сăмах микробиологиллĕ «Планриз» препарат пирки. Ку имçам ял хуçалăх культурисене кăмпа тата бактери чирĕсенчен хӳтĕлеме пулăшать. Кĕрхи тулăна унпа имçамласси культура юлашки çулçăна ларнă вăхăтчен туса ирттермелли ĕç (пĕр гектар пуçне шывпа пĕрле 300 литр). 10 миллилитр «Планриза» 10 литр шыв çине ярса хатĕрленĕ хутăшпа купăстана, 1 литр шыв çине 1 миллилитр имçам хушса хатĕрленĕ хутăшпа хăярсене, литр шыв çине 20 миллилитр хушса çĕр çирлине, 10 миллилитр хушса винограда шăварни те пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех килти хушма хуçалăхсемшĕн те вырăнлă.

Халĕ тата маларах асăннă препаратсене эсир «Россельхозцентртан» (унăн филиалĕ Муркашри вăрлăх инспекцийĕн çуртĕнче вырнаçнă) туянма пултаратăр.

Мĕнех, акнă-лартнă культурăсене çум айне хăвармасан, тĕрлĕ чир-чĕрпе сăтăрçăсенчен хӳтĕлесе хăварсан кĕркуннехи тухăç сирĕнтен кашнинех савăнтарĕ.

А. БЕЛОВ калаçнă.

Çăркунне тата «01»

Вăрмана тухсан

Тăван тавралăх çу илемне алла илнĕ вăхăтра çут çанталăка канма тухакансен йышĕ палăрмаллах ӳсет. Анчах вăрманти е улăх-çаранти типĕ курăк пушар тухаслăха ӳстерни пирки кашнийĕнех асра тытмалла. Çавăнпа та пушă вăхăтра çут çанталăка тухса канас текенсен уйрăмах лăсăллă вăрмансенче, торфлă вырăнсенче, йывăçсем касса тирпейлесе хунă вырăнсанче, типĕ курăксем нумай çĕрте тата йывăçсен вуллисем айĕнче кăвайт чĕртме юрамасть. Ытти вырăнсенче те вут-кăвар чĕртме пур енлĕн асăрханмалла. Киле каяс умĕн кăвайта тĕплĕ сӳнтермелле, ăна тăпрапа сапса хăварни те ытлашши пулас çук.

Çавăнпа пĕрлех вăрманта пирус тĕпĕсене ăçта килнĕ унта пăрахассинчен те, кăвара унта-кунта сапалассинчен те, кĕленчесемпе банкăсене пăрахса хăварассинчен те асăрханмалла.

Техникăна шăлса тасатсан çулланнă, бензинланнă материалсене вăрмана пăрахса хăварни те инкек патне илсе çитересси пирки манас марччĕ.

Вăрман илемлĕ пулни хамăршăнах иккенне яланах асра тытасчĕ.

В. КОЧКОМАЗОВ,
«Россельхознадзор» управленийĕн вăрман тĕрĕслевĕн специалисчĕ.

Чечек ăстине пĕлме

Сулхăнра аван ӳсеççĕ

Пахчасенче хĕвел сахал ӳкекен вырăнсене те кил хуçин усăсăр вырттарас килмест. Ун пек çĕрте чечек калчисем ӳстерме пулать-и тата мĕнле чечексем вăл вырăнсене тиркемеççĕ?

Т. ИВАНОВА.
Мăн Сĕнтĕр сали.

Ыйту çине хуравлама ыйтса «Россельхозцентр» ФГУ Чăваш Республикипе ĕçлекен филиалĕн Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп агрономĕпе А.С. СЕМЕНОВПА тĕл пултăмăр.

Çĕрпе туллин усă курасси – патшалăх шайĕнче хускатнă ыйту. Ял çыннин килти хушма хуçалăх экономики вара пахча аталантарăвĕпе тачă çыхăннă. Вулавçăн ыйтăвĕ çине çапла хуравлатпăр:

– Сулхăнрах вырăнсене чăтăмлă чечексем çаксем: упа сарри, атăш курăкĕ (папоротник), хоста (функия), тутлă чечек (медуница сахарная), виноград çулçиллĕ ветреница (августра çеçке çурать), дицентра (июнь – август), май уйăхĕнче чечеке ларакан писев курăкĕ (купена многоцветная), лантăш, пӳрнеске курăкĕ (наперстянка пурпурная).

Тĕмĕпе ӳсекенсенчен сулхăнрах вырăнсенче çаксем лайăх çитĕнеççĕ: гортензи тата вейгела.

Хĕвел кăштах кăна лекнĕ çĕрте астильба, шăнкăрав курăкĕ, примула, лилейник, чăмăр чечек (купальница) çитĕнтерме пултаратăр.

Асăннă чечексене пасарсенче тупса илме пулать.

Пирĕн истори – пирĕн кун-çул

Шурча вăрçи – тăван ен палли

(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте).

Пăлхав тавраш енĕпе уйрăмах Чикме уесĕ палăрса тăнă. Хусан кĕпĕрнинчи патшалăх пурлăхĕн управляющийĕ Нефедов губернатор патне 1842 çулхи мартăн 27-мĕшĕнче янă донесенинче Аслă Оринин, Шетмĕпуç, Хуракасси, Йӳçкасси, Матьăк, Актай тата ытти хăш-пĕр обществăсен çыннисем хăйсен çĕрĕсене обществăлла çĕре уйăрса пама хирĕç пулни çинчен пĕлтернĕ. Пĕлтернине Шипов генерал-губернатор çавăнтах шалти ĕçсен министрĕ патне çитернĕ.

Майăн 10-мĕшĕнче ятарласа шĕвĕртсе хатĕрленĕ çинçе юпапа е çавăн евĕрлĕ япаласемпе хĕç-пăшалланнă хресченсем Шурчана пухăннă. Ял чиркĕвĕн пачăшки Александр Петрович Архангельский (ялта ăна «салакайăк» тенĕ) хресченсене «апла ан тăвăр, кайран хăвăрах япăх пулĕ» тесе ӳкĕтлеме пикенсен, хресченсем ăна хăйне хĕнесе пĕтернĕ. Кĕçех Шурчана Поль полковник отрячĕпе казаксен ушкăнĕ килсе çитнĕ. Вĕсенче пурĕ 250 таран çар çынни пулнă. Уес пуçлăхĕсем те Шурчана пуçтарăннă.

Вăйсем икĕ енчен те хушăнсах пынă. Акă, майăн 19-мĕшĕнче Шурчана Чикме уесĕнчи нумай вулăссенчен 8 пин хресчен пухăннă. Вĕсем тимĕр сенĕксемпе, вăрăм авăр вĕçне ыйă лартнă хатĕрсемпе, çава тата ытти çавна евĕр япаласемпе хĕç-пăшалланнă пулнă.

Патшалăх пурлăх министерствин представителĕ Корф барон тата Хусанти палата управляющийĕ хресченсене икĕ сехет хушши влаçсем хушнипе-ыйтнипе килĕшме ӳкĕтленĕ. Хресченсем килĕшмен: «Эпир ĕлĕкхи йĕркепех пурăнасшăн», – тесе хуравланă.

Хресченсем итлеменрен салтаксем вĕсене хăваласа ярас шутпа тапăннă. Çĕр ĕçченĕсем каялла чакма шутламан – çапăçу пуçланса кайнă. Салтаксем хресченсене пăшал приклачĕсемпе, казаксем пикăсен пуклак вĕçĕсемпе хĕнеме тытăннă. Вăхăт иртнĕ май вĕсем 464 çынна арестленĕ, 30 хресчене амантнă.

Хресченсене ӳкĕте кĕртме çуккине курса Хусантан хушнипе майăн 19-мĕшĕнче каçхине Крюденер отрячĕ, тепĕр кун ирхине 150 çынлă Алексеев отрячĕ килсе çитнĕ. Çапла вара Шурчара патшалăхăн хĕç-пăшаллă вăйĕсем 650 çынна яхăн пуçтарăннă.

Майăн 20-мĕшĕнче кăнтăрла тĕлĕнче Оринин енчен Хуракасси пасарĕ ялĕ еннелле халăх кĕпĕрленсе килме пуçланă. Халăхне Шурчана хĕç-пăшалланса кайма ялтан-яла чĕнсе çӳрекенсем те пулнă иккен. Хресченсем сенĕк, çава, пуртă таврашсемпе хĕç-пăшаллансах çула тухнă. Вĕсем Хусантан килнĕ отрядсене хăваласа ярас та ĕнер арестленисене ирĕке кăларас тĕллевпе килнĕ. Хресченсен йышĕ 10 пин çынран та иртнĕ. Унта Чикме уесĕсĕр пуçне Етĕрнепе Шупашкар уесĕсенчен килнисем те пулнă.

Хресченсене салтаксем Хуракасси пасарĕ ялĕ çумĕпе юхса иртекен Муркаш юханшывĕ хĕрринче çула картласа тăнипе кĕтсе илнĕ. Хресченсем çитсенех Муркаш юханшывĕ урлă хывнă кĕпере сӳтсе пăрахнă. Казаксем лашасемпе шыв урлă каçса хресченсене икĕ енчен хупăрласа илме пуçласан, хĕрӳ çапăçу пуçланса кайнă. Салтаксем хресченсене прикладсемпе хĕненĕ, хĕçсемпе каснă. Ку çеç те мар, салтаксем пăшалсенчен пеме пуçланă. Пурĕ 30 залп тунă. Хресченсем, вĕсемпе танлаштарсан, япăх хĕç-пăшалланнă пулин те, харсăрăн çапăçнă. Паллах, çар çыннисемех çĕнтернĕ. Хресченсем тĕрлĕ еннелле тарма тытăннă, салтаксемпе казаксем вĕсене хăваласа çитсе çапа-çапа ӳкернĕ. Çапăçу хирĕнче хресченсенчен 8 виле, йывăр аманнă 39 çын выртса юлнă, 192 çын çăмăл аманнă, 182 хресчене тытса çыхса хунă. Карательсенчен 2 офицер, 4 казак, 77 салтак аманнă. Аманнă хресченсенчен тепĕр кун тĕлне 28 çын, кайран тата 10 çын вилнĕ. Çапăçура салтаксен 108 пăшал приклачĕ ванса пĕтнĕ, казаксен 8 пика хуçалнă.

И. ВЯЗОВ.
(Малалли пулать).

Шăмат кунхи рубрика

Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре

РЕДАКЦИРЕН: Хаçат вулакансем унччен рех тухса тăнă паянхи рубрика хаçат страницисенчен çухални пирки калаçкаланăран çак çитменлĕхе пĕтерме район прокуратурипе çыхăнтăмăр. Пухăннă ыйтусем çине район прокурорĕн çумĕ, юстици советникĕ Юрий Мефодьевич СЕМЕНОВ хуравлама пулчĕ.

Суйса пĕлтернĕшĕн

Паян халăхра милиции суйса хыпарлакансем те пур теççĕ. Нивушлĕ хамăра пулăшакансене суйма пулать тата çакă вăл преступлени-и? Кун пек тĕслĕхсем чăнах пур пулсан, айăплавĕ мĕнлерех-ши?

П. СИДОРОВ, В. ИГНАТЬЕВ.

Çапла, милици ĕçченĕсене суя хыпарпа ĕçлеттерни преступлени шутланать. Ку вăл – йĕрке хуралне хирĕç тунă преступлени. Пĕр тĕслĕх. Кăçалхи апрелĕн 5-мĕшĕнче Кӳстерекри В. Михайлов шалти ĕçсен пайĕнчи йĕрке хуралçисене суя çулпа ĕçлеттерес тĕллевпе унччен хăйĕн харпăрлăхĕнче пулнă тата документсене çĕнĕлле йĕркелемесĕрех А. Андреева сутнă ВАЗ-2106 автомашинăна хăваласа кайнă тесе паллă мар çынна тупса РФ Уголовнăй Кодексĕн 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступленишĕн явап тыттарма ыйтса çыру çырать. Çак вăхăтра ăна йĕрке хуралçисем суя хыпаршăн уголовнăй майпа ответ тыттарасси пирки ăнлантарнă пулнă. Анчах... А. Андреевăн ывăлĕ В. Андреев тытса пынă асăннă автомашина çав кунхине ирхи пĕр сехет тĕлĕнче «Волга» – Шурча – Шуркасси автоçулăн 4-мĕш километрĕнче кювета çаврăнса ӳкнĕ пулнă. Çапла майпа водитель РФ КоАПĕн 12.7 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă йĕркене пăснă. Çапла вара çыру хыçĕнче çак инкеке пытарас тĕллев пулни курăнать. Çак суя утăм тĕпчевсем вăхăтĕнче палăрчĕ.

Çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче çак ĕçе Муркаш район сучĕ пăхса тухрĕ. Суд Владимир Николаевич Андреева РФ Уголовнăй Кодексĕн 306-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе палăртрĕ, йĕрке пăсакана 4500 тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăнчĕ.

Карчăка хĕненĕшĕн

Çынсем пĕр-пĕрин хушшинче сиксе тухакан харкашусенче вĕлерессипе хăратнишĕн те хăратакана саккун умĕнче явап тыттараççĕ тенине илтрĕмĕр. Тĕрĕсех-и? Тата кунашкал тĕслĕхсем районти прокуратура практикинче пур-ши?

С. ОХТИНОВ.

Тĕрĕсех. Районти йĕрке хуралĕнчи юлашки тĕслĕхпе паллаштаратăп. Кăçалхи январĕн 13-мĕшĕнче 12 сехет иртсен Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Туçи Олкашра 83 çулхи З. Трифонована хăйĕн килĕнче унччен темиçе хутчен те судпа айăпланнă Ю. Коновалов хăйсем хушшинче тухнă килĕшӳсĕрлĕхе пула ыраттарас тĕллевпех алă-урапа çапса-тапса тăкать. Сулахай чĕркуççин икĕ пăкăлчак шăммине те хуçса вырăнтан куçарса ярать, ура лаппине мăкăлтать. Çаксемпе пĕрлех вăл ватă хĕрарăма вĕлерсе нӳхрепре пытарассипе хăратать. Иртнĕ кĕркунне условнăй йĕркепе 1 çулталăк та пĕр уйăх та 6 кун маларах ирĕке тухнă 50 çулхи арçынна унченхи айăплав вĕçленменнине шута илсе 4 çуллăха ирĕкрен хăтарма тиврĕ. Ку ĕçе район сучĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче пăхса тухрĕ.

Алла çĕçĕ тытсан...

Çынна çĕçĕ тытса хăратнăшăн суд тенкелĕ çине лартаççĕ-и? Кун пек чух умри çынна вĕлересси те инçе мар.

А. СТЕПАНОВА.

Каларăм кăна, çынна вĕлерессипе хăратни те преступлени. Тепĕр тĕслĕх илсе паратăп. Москакасси ял тăрăхĕнчи Уйкас Хачăкра пурăнакан М. Савельев, çулталăк çурă маларах кăна 11 çул та 3 уйăх тĕрмере ларса таврăннăскер, кăçалхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕнче хăйĕн килĕнче чашăктирĕк шакăртатнă вăхăтра хăратас тата психика тĕлĕшпе пусмăрлас тĕллевпе алла çĕçĕ тытса Р.Г. Савельевана «Вĕлеретĕп!» тесе хăратса пĕтерет. Р. Савельева пĕрре мар тĕрмере пулнă арçын сăмахĕсем вăйă маррине ăнланать.

Апрелĕн 28-мĕшĕнче ку ĕçе район сучĕ пăхса тухрĕ: М. Савельев йĕркене пăснине йышăнчĕ, ку таранччен темиçе хут ирĕкрен хăтарнă арçынна ку хутĕнче пĕр çулталăк çирĕп режимлă колонире «юсав вăхăчĕ ирттерме» приговор кăларчĕ.

Электричество вăрри

Электричество энергийĕ те хакланса кайнăран ăна ялсенче «вăрлакансем» тĕл пулаççĕ. Пĕлес килет, саккунпа вĕсене ирĕкрен хăтараççĕ-и е урăхла айăплаççĕ?

Ф. ШИРОКОВ.

Чăнах та, кун пек тĕслĕхсем те пирĕн практикăра тĕл пулаççĕ. Акă апрелĕн 8-мĕшĕнче çакнашкал «ĕçшĕн» 66 çулхи арçынна айăпларăмăр. Район сучĕ ĕçре ырă ятлă пулнă пенсионера уйăх хушши электричество вăрланăшăн РФ Уголовнăй Кодексĕн 165 статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе 4 пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăнчĕ. Çакă ялсенчи ытти çынсемшĕн те вырăнлă пуласса шанатăп.

РЕДАКЦИРЕН: Вулакансен çырăвĕсене эпир хапăл тусах кĕтетпĕр. Вĕсем кашниех район прокуратуринче хурав тупĕç.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды Петровой Галине Семеновне, из категорий «земли сельскохозяйственного назначения», с кадастровым номером: 21:17:070602:49, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:070602, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 6000 кв. м.

Заявки принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.